Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

94 (8160) № * Шăмат кун, 2013 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 14-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Наци проекчĕсем вăйрах-ха

Сакăр çул каялла агропромышленноç комплексне аталантарассипе, пурăнмалли хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе йышăннă приоритетлă наци проекчĕсем, «Сывлăх» тата «Вĕренӳ» наци проекчĕсем вăйрах-ха, вĕсене никам та пăрахăçа кăларман. Декабрĕн 10-мĕшĕнче Республика Пуçлăхĕ çумĕнчи çак проектсене пурнăçа кĕртессипе ĕçлекен канашăн ларăвĕнче юлашки итогсене пĕтĕмлетнĕ, кулленхи ыйтусене сӳтсе явнă.

Лару чикĕллĕ яваплăхлă «ЮРМА» агрохолдинг» обществăн Лапсарти площадкин офисĕнче иртнĕ. Ăнсăртран мар. Ларура аграри проекчĕ çине ытларах тимлĕх уйăрнă. Нумай профильлĕ «ЮРМА» холдинг вара асăннă наци проектне ăнăçлă пурнăçа кĕртессине курăмлă тĕслĕх вырăнĕнче. Ним сукран тенĕ пек пуçăннă холдинг паян аграри бизнесĕн пур енĕсене те алла илет – чăх-чĕп, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеççĕ, ӳсен-тăран продукцийĕ туса илеççĕ, выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ.

Юлашки вăхăтра выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илесси чакма пуçăннине чарассин, çурт-йĕр строительствин хăвăртлăхĕсене сыхласа хăварассин, сывлăх сыхлавĕн пахалăхĕн, шкул ачисен апатланăвĕн ыйтăвĕсемпе те ларура калаçу пулнă.

ВСМ-2

## «Коридор» паллă. Малалла пăхас пулать

«Хальлĕхе трасса тума май пурри пирки кăна сăмах пырать», – палăртнă Чăваш Ен транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министрĕ Михаил Янковский проектăн ĕç ушкăнĕн ларăвне уçнă май. Пуйăссем пысăк хăвăртлăхпа çӳремелли чукун çул магистралĕ Етĕрне, Муркаш, Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсем урлă иртмелле. Станцисем Етĕрне районĕнчи Полянккă тата Шупашкар районĕнчи Мăнал ялĕсем патĕнче пулмалла.

Трасса Чăваш Енпе иртессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă çĕре чикĕллĕ яваплăхлă «Скоростные магистрали» общество специалисчĕсем те хутшăннă.

Канашлу итогĕсене пĕтĕмлетсе çавна калама пулать. Чукун çул тăвассипе хатĕрленӳ ĕçĕсем хăвăртланĕç. Ăна 2018 çул тĕлне хута яма пăхнă. Çав çул Раççейре футболла выляссипе тĕнче чемпионачĕ иртет.

Проекта пурнăçа кĕртмелли правăна тивĕçме конкурс ирттерме хатĕрленес ĕçсем пыраççĕ. Унта тĕнчери паллă компанисем те хутшăнаççĕ. Вĕсен кун пек магистральсем тăвассипе опыт пур. Ку ĕç Японире, Китайра, Германире, Францире, Испаните тивĕçлĕ шайра. Раççейре вара халиччен кун пек магистральсем туман.

Л. НИКИТИН.

Çырăнтару – 2014

## Çырăнмасăр ан юлăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2014 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. Вăхăт нумаях юлмасть. Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

Çĕнĕ çул уявĕ пурин валли те

## Кунта сире ялан хавас



*Çĕнĕ çул сывăхарах та çывăхарах. Апла пулсан çак пысăк уява хатĕрленессине те паян ыранхи куна хăвармалла мар. Çакнашкал сăмахсемпе кĕтсе илчĕ мана Муркаш райповĕн 1-мĕш номерлĕ апат-çимĕç магазинĕн ертӳçи Раиса Ярикова (сăн ӳкерчĕкре сылтăмри). Черетлĕ ĕç кунне хатĕрленнĕ май вĕсем Ирина Егорова сутуçăпа сентресене уяв илемĕ кĕртессипе ĕçлетчĕç.*

*Ĕçчен хĕрарăмсем райпо тытăмĕнче 7 – 14 çул вăй хураççĕ.*

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Сăмах – райадминистраци ĕçченĕсене

## Шкулти апатлану лайăхланĕ



***Шкул çурчĕсене юсаса çĕнетни, çĕнĕ оборудовани вырнаçтарни ачасен вĕренӳ процесĕ çине лайăх витĕм кӳнине хирĕçлеме çук. Çакăнпа пĕрлех ачасем шкулта мĕнле апатланаççĕ-ха? Шкулсенче пурте вĕри апат çиеççĕ-и? Ку та пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен апатлану ачан ăс-тăн тата ӳт-пӳ аталанăвĕпе тачă çыхăннă.***

***Çак ыйтусене район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. ДИПЛОМАТОВА уçăмлатса парĕ:***

– Шкул столовăйĕсенчи апат блокĕсене оптимизацилемелли программăпа килĕшӳллĕн кăçал Йӳçкассинчи, Чуманкассинчи, Юнкăри тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсенчи столовăйсене юсаса çĕнетме май килчĕ. Çакна валли вырăнти бюджетран 800 пин ытла тенкĕ тăкакланă, унта валли сĕтел-пукан туянма – 707 пин ытла тенкĕ. Столовăйсенче апат-çимĕç пĕçермелли оборудование 4194225 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Çак укçа-тенкĕне федераци бюджетĕнчен уйăрса панă.

Паянхи куна вĕренекенсен 98 проценчĕ шкулта апатланать. Пуçламăш тата вăтам сыпăксенче вĕренекенсем 100 процентчĕпех вĕри апат çиеççĕ, икĕ проценчĕ – аслă классене вĕренекенсем, вĕсенчен хăшĕ-пĕри шкулпа çывăх пурăннăран пысăк тăхтав вăхăтĕнче килте апатланма кăмăллаççĕ.

Апатлану вăтамран кунне 25–30 тенкĕпе танлашать. Кунта ирхи иккĕмĕш апатланупа кăнтăрлахи апат кĕреççĕ. Çак хак шкулсем хăйсен сăнавлă участокĕсенче тата хушма хуçалăхĕсенче пахча çимĕç туса илнĕрен йӳнĕрех. Вĕренӳ учрежденийĕсем апат-çимĕçе индивидуаллă предпринимательсемпе килĕшӳ туса ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви палăртнă хаксемпе туянаççĕ. Апат-çимĕç туянас енĕпе пирĕн учрежденисен ыйту тухса тăмасть. Ĕçе йĕркене кĕртнĕ ĕнтĕ.

Кашни шкултах поварсем çителĕклĕ. Кăçал кĕркунне пур повар та, вĕсен пулăшаканĕсем те ятарлă курссенче вĕренчĕç. ЧР Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви тунă килĕшӳ тăрăх Шупашкарти апатлану коммерци техникумĕ вырăна тухса курссем йĕркелерĕ. Вĕсем тӳлевсĕр иртрĕç. Эпир курса тăнă тăрăх та, поварсем хăйсем каланă тăрăх та – пĕр эрне питĕ усăллă иртрĕ.

Малашне эпир апатлану ассортиментне пуянлатассипе ĕçлеме тытăнатпăр. «Шведский стол» мелне шкулти апатланура пурнăçа кĕртес шутлă. Çитес çул çакна темиçе шкулта йĕркелесе пăхатпăр. Малтанласа шутланă тăрăх ачасем апатланасси лайăхрах шайра пулмалла.

Çитес вăхăтрах Муркашри вăтам шкулта ачасене карточкăпа тӳлесе апатланмалли йĕркене куçатпăр. Çакна валли унта ятарлă терминал вырнаçтармалла. Ачасен карточки çине ашшĕ-амăшĕн укçа куçарса тăмалла пулать. Вĕсен телефонĕ çине вара ача апатланни çинчен смс-хыпар килсе тăрĕ. Çапла майпа ашшĕ-амăшĕ ача апатланнине контрольлеме пултарать.

Çыру

## Тĕп çул-йĕре палăртрĕ

Декабрĕн 12-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин РФ Федераци Пухăвне яракан çулленхи Çырăвĕпе тухрĕ. Ăна вăл Кремльти Пысăк керменĕн Георгиевски залĕнче вуласа пачĕ. Хăйĕн 1 сехет те 10 минута тăсăлнă Çырăвĕнче Владимир Путин çĕр-шыв аталанăвĕн малашлăх задачисене палăртрĕ. Вĕсем экономикăпа социаллă пурнăçăн пур сферисене те пырса тивеççĕ.

Çыруri самантсене уйрăммăн палăртас пулсан, кусем вĕсем халăх ушкăнĕсем хушшинчи хирĕçӳсен сăлтавĕсем, май уйăхĕнчи указсене пурнăçласси, демографи лару-тăрăвне лайăхлатасси, çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси, çулленхи диспансеризаци, тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕ, сывлăха сыхлас ĕç системи, вĕренӳ системинчи патшалăх политики, çĕр участокĕсене ансатрах мелпе уйăрса парасси, çемье тытăмĕн хаклăхĕсем, студентсен çар хатĕрленĕвĕ, çар çыннисене çурт-йĕрпе тивĕçтересси, вырăнти хăй тытăмлăх системин аталанăвĕ, ют çĕр-шыв çыннисемпе çыхăннă ыйтусем т. ыт. те.

Çырăвăн тулли тексчĕпе, çавăн пекех фото- тата видеоматериалсемпе rg/ru/art/895455 сайтра та паллашма пулать.

Йышăну

## Кашни ял тăрăхĕнчех

РФ Конституцийĕн кунĕнче декабрĕн 12-мĕшĕнче кăçал пуçласа Пĕтĕм Раççейри граждансене йышăнмалли кун иртрĕ. Граждансене хăйсене интерессентерекен ыйтусемпе йышăнма çав кун районĕпе автоматизациленĕ ĕç вырăнĕсем пĕтĕмпе 18 йĕркеленĕ. Вĕсем кашни ял тăрăхĕнчех, çавăн пекех район администрацийĕнче 2 пулнă. Йышăнăва пыракан граждансем видеорежим мелĕпе район структурин тата республика влаç органĕсемпе, министерствăсемпе тата ытти структурăсен çыхăнма пултарнă, ыйтусем çине тулли хуравсем илнĕ.

Йышăнăва мĕн пурĕ 74 çын пынă. Вăл шутран район администрацине 15 çын. Граждансем уйрăмах активлăх кăтартнисем шутĕнче Ярапайкасси, Чуманкасси ял тăрăхĕсем. Çийĕнче татса пама май пулман пирки 4 гражданинăн ыйтăвне хурав парассине каярах вăхăта куçарнă.

Олимп çулăмĕн эстафети




## Эстафета Шупашкара çитĕ

2014 çулхи февралĕн 7 – 23-мĕшĕсенче Сочире хĕллехи Олимп вăййисем иртесси пирки пĕлетпĕр. Кăçалхи декабрĕн 27-мĕшĕнче вара Чăваш Ен тĕп хулинче Олимп çулăмĕн эстафети иртмелле.

ЧР Физкультурăпа спорт тата туризм министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх эстафета кăнтăрла 12 сехетре чукун çул вокзалĕнче старт илĕ, Олимп вăййисен тĕп символĕ хула урамĕсемпе (пĕтĕмпе 33 километра яхăн) хĕмленсе «Олимпийский» стадиона çутаĕ. Унтах пысăк та савăнăçлă уяв кĕрлĕ. Хĕрлĕ лапам та чаплă концерта йыхравлĕ, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансем Хĕл мучипе зарядкăна тухĕç.

Олимп çулăмне вара 163 çынна йăтма шаннă. Ку йышра республикăри паллă спортсменсемпе тренерсене, общество представителĕсемпе патшалăх службин ĕçченĕсене, ӳнер ăстисене, вĕрентекенсемпе студентсене курма май пулĕ. Вĕсем хушшинче РСФСР тава тивĕçлĕ тренерĕ Владимир Григорьев, хĕллехи Универсиада чемпионки Татьяна Моисеева, полици капитанĕ Светлана Ерпылева, Валерий Карпов артист, шкул олимпиадисен çĕнтерӳçи Кирилл Львов, Раççей чемпионки Кристина Савицкая, Паралимп вăййисене хутшăннă Юрий Ильин йĕлтĕрçĕ тата ыттисем. Çавăн пекех эстафетăна Универсиада çулăмĕн эстафетинче ытла 300 ытла волонтер хутшăннă.

Района йĕркеленĕренпе 70 çул çитнĕ май

# Тайма пуç, вĕрентекенĕмĕр!

Раштавăн 5-мĕшĕнче Галина Никифоровна Ильдерова учитель-ветеран 75 çул тултарчĕ. Шăп та лăп 50 çул районти тĕрлĕ шкулта ачасене ют чĕлхесене вĕрентес ĕçре тăрăшнă. Малтанах Калайкасси шкулĕнче (1960 – 1964 çулсем), каярахпа Муркашри тата хăйĕн тăван Çатракассинчи вăтам шкулсенче (1964 – 1971 тата 1971 – 2010 çулсем). Пĕр вăхăт, шкулта ĕçленипе пĕрлех, районти халăха вĕрентес ĕç пайĕнче методикăпа вĕренӳ кабинетне ăнăçлă ертсе пынă (1986 – 1990 çулсем). Нумай çул хушши Çатракасси шкулĕн завучĕ пулса ĕçленĕ, районти ют чĕлхесем вĕрентекен учительсен методпĕрлешĕвне ертсе пынă.

Çур ĕмĕр шкул ĕçĕпе ĕçленĕ вăхăтра хисеплĕ вĕрентекен 70 çул тултаракан Муркаш районĕн историйĕнче те, хăй вĕрентнĕ нумай ачан шăпинче те паллă йĕр хăварнă тесе çирĕплетсех калама пулать. Галина Никифоровна вĕрентнĕ е класс ертӳçи пулса ертсе пынă вĕренекенсем хушшинче каярах ял хуçалăх ĕçĕн специалисчĕсем, строительсем, промышленноçра тăрăшакан рабочи-инженерсем, çар çыннисем, учительсемпе врачсем пулса тăнă çынсем сахал мар. Тĕрлĕ шайри ертӳçĕсем те нумай, шкул директорĕсем, колхоз председателĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, пурнăçне наукăпа çыхăнтарнисем, аслă вĕренӳ заведенийĕсенче декан е кафедра заведующийĕ пулса ĕçлекенсем те пур.



Теçетке ытла вĕренекенĕ вара унăн специальноçне – ют чĕлхесем вĕрентес ĕçе суйласа илнĕ. Çав шутра халĕ Шупашкарти 45-мĕш шкулта ĕçлекен хăйĕн хĕр ачи Наталия Георгиевна та. Кун пек кăтарту хăех учительшĕн мухтанмалли тата паллă курăм шутланать. Юратнă вĕрентекен çулне суйласа илнисенчен ытларахăшĕ хамăр Муркаш районĕнчех ĕçленĕ е ĕçлет.

Г.Н. Ильдерова Раççей тава тивĕçлĕ вĕренӳ ĕçченĕ, ăна «Çерем çĕрсене уçнăшăн» тата «Ĕç ветеранĕ» медальсемпе наградăланă, Раççей, республика тата район шайĕнчи грамотăсемпе, дипломсемпе, Тав хучĕсемпе пĕрре кăна мар чысланă.

Хисеплĕ ветеран Çатракасси ялĕнче упăшкипе Георгий Федоровичпа 1964 çулта хăйсем лартнă хăтлă кил-çуртра пурăнать. Хулара пурăнакан хĕрĕпе ывăлĕ хăйсен çемйисемпе амăшĕ патне килсех тăраççĕ. Хуçалăха тытса пырас ĕç халĕ ытларах вĕсем çинче ĕнтĕ. Мăнукĕсем те ĕçрен ютшăнмаççĕ.

*Юбилей умĕн районти паллă вĕрентекенпе пирĕн обществăлла корреспондент Валерий ФЕДОРОВ курса калаçнă. Сăмах май вăл хăй те унăн вĕренекенĕ пулнă.*

**– Галина Никифоровна, Çатракасси шкулĕнче эсир пирĕн класăн ертӳçи пулса ĕçленĕ çулсенче (1971 – 1975 çулсем) 7-мĕш класран пуçласа 10-мĕш класран аттестатсем тыттарса шкултан ăсатса яриччĕнех пирĕншĕн «иккĕмĕш анне» вырăнĕнчех пулнă, каярах та пирĕнтен нумайăшне пурнăç çулĕ çинче тĕрлĕ енлĕ пулăшса пыма тăрăшнă. Тавах сире çавăншăн. Эпир сире халĕ те анне вырăнне хурсах хисеплеме тивĕç...**

**Нумаях пулмасть çĕршывра Аннесен кунне паллă турĕç. Эсир: «Пĕтĕмпех çемьерен пуçланать», – тенине пĕрре кăна мар илтме тивнĕ – шкулта вĕреннĕ çулсенче те, каярах та. Мĕнле шутлатăр, сирĕн пурнăçра тăван анне мĕнлерех вырăн йышăннă? Кунсăр пуçне тата вĕрентекен ĕçне суйласа илесси сирĕн çемьерех пуçланнă-и е каярах, аттестат алла илнĕ тĕлелле-и?**

– Тавах ырă сăмахсемшĕн. Вăрçă çулĕсенче тата вăрçă хыççăнхи çулсенче ачасене пăхма, вĕсене тумлантарма-тăрантарма, шкулта вĕрентме нихăш çемьешĕн те çăмăл пулман. Паллах, йывăрлăхсем чи малтанах амăшĕсем çине тиеннĕ. Çав йывăр çулсенчи аннесем пирĕн пурнăçра мĕнлерех вырăн йышăннине нимĕнпе виçме те, сăмахпа ăнлантарса пама та май çук пулĕ.

Манăн анне Елизавета Васильевна Васильева, 1911 çулта çак ялтах çуралнăскер, çемьере асли пулнă. Çавна май унăн 4 класран ытла вĕренме май килмен, кĕçĕннисене пăхмалла пулнă, хуçалăхра пулăшнă.

Каярахпа аттепе пĕрлешсе çемье çавăрнă. Атте те, Никифор Архипович Ильдеров, 1913 çулта çак ялтах çуралнă.

Вăрçă тухнă чухне эпĕ икĕ çул çурăри ача пулнă. Йăмăк Валя 1942 çулта çуралнă. Пирĕн шкул хыççăн та малалла вĕренес кăмăл çемьерех, атте-анне хистенипе çуралнă тесен йăнăш пулмасть пулĕ. Анне: «Хам вĕренейменнишĕн эсир те пулин вĕренмех тăрăшăр-ха», – тесе тăтăшах калатчĕ.

Çатракассинчи 7 çул вĕренмелли шкулăн 1-мĕш класне эпĕ вăрçă пĕтнĕ çул, 1945 çулта кайнă. Манăн пĕрремĕш вĕрентекен – Елизавета Ивановна Павлова. Октябренок пулнă, кайран пионера кĕнĕ. 1952 çулта комсомол билетне алла инĕ. Çав çулах Муркашри вăтам шкулта вĕренме пуçланă. Унтан 1955 çулта вĕренсе тухса алла аттестат илнĕ. Вăл вăхăтра вĕреннĕшĕн укçа тӳлеме тивнĕ.

**(Малалли пулать).**

**Сăн ӳкерчĕкре: Галина Никифоровна хăйĕн пулас мăшăрĕпе Георгий Федоровичпа (1961 çул).**

Саламлатпăр



Хисеплĕрен те хисеплĕ, ылтăнкĕмĕлтен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах, çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăра – Оринин салинче пурăнакан **Ритта Евгениевна ГОРШКОВАНА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăйхал, тумхахсăр кун-çул, телей сунатпăр. Санăн ялан хавас кăмăл пултăр, чун ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр. Эс пурришĕн Турра тав тумашкăн сăмах та çитмест. Ырă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра сан çунаттусем айĕнче канлĕх те ăнланулăх тупма пулнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити тайма пуç. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, икĕ ывăлĕпе кинĕсем тата мăнукĕсем.**

Юратнă йăмăка, хисеплĕ тăвана – Оринин салинче пурăнакан **Ритта Евгениевна ГОРШКОВАНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр, ырлăхсывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Ачусен, мăнукусен хаваслă сассине итлесе, ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Турри сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр.

**Ăшă салампа: аппăшĕпе йыснăшĕ, Борисовсен, Ястребовсен, Волковсен çемйисем, тăванĕсем.**

Оринин салинче пурăнакан **Ритта Евгениевна ГОРШКОВАНА** юбилей ячĕпе ăшшăн-ăшшăн саламлатпăр. Чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей, нумай çул пурăнма юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Ырă кӳршĕ тăванран та хаклă. Çавăнпа та малалла та пĕрпĕрне килĕштерсе туслăн пурăнар. Ялан çиçтĕр сăнпитре телей, савăк пултăр юбилей.

**Пысăк салампа кӳршисем.**



Муркаш салинче пурăнакан, нумай çул хушши «Моргаушавтотехсервис» предприятире бухгалтер пулса ĕçлекен **Елена Поликарповна ИВАНОВАНА** юбилей ячĕпе саламлатпăр.

Елена Поликарповна, сывлăхăр çирĕп пултăр, утас çулăр телейлĕ, пурнас кун-çулăр вăрăм килтĕр. Мăшăрун юратăвĕ, ачусемпе мăнукусен ăшши яланах сире малалла пурăнма вăй-хăват парса тăччăр.

**Ырă кăмăл сунса Максимовсен, Николаевсен çемйисем, Кашмашри Александровсен икĕ çемйи тата Любăпа Анечка.**

От всей души и от всего сердца поздравляем нашу уважаемую, гостеприимную и любимую сводную сваху **ИВАНОВУ Елену Поликарповну** с прекрасным юбилеем – 60-летием со дня рождения. В жизни главное желаем – здоровья, счастья, радости, любви, оптимизма и пусть окружают тебя только любимые люди.

60 тебе золотых, 60 – это миг,
60 тебе трудовых, 60 – это жизнь,
60 тебе жизнь отсчитала! 60 – это только начало!

**С поздравлением: сватья Трофимовы из Шоркасов Ибресинского района.**

Поздравляем **СКОРОХОДОВУ-СТЕПАНОВУ Лидию Владимировну и СТЕПАНОВА Ивана Трофимовича** с днем золотой свадьбы. Желаем крепкого здоровья, успехов, долголетия.

**С поздравлением: бывшие коллеги по работе на плодокомбинате.**

# 95 çул – сумлă çул

Театр

Иртнĕ шăмат кун Орининти халăх театрĕ 95 çул тултарнине сумлăн уявларăмăр. Çавна май Орининти Культура çуртне халăх питĕ йышлă пухăнчĕ. Çапах та чи малтан театр историйĕ пирки асăнсан вырăнлăрах пулĕ.

Орининти халăх театрĕн истори тымарĕ питĕ тарăн, вăл 1918 çултан тытăнать. Орининти пуçламăш шкулта кĕркунне Чикме хулинче вĕренекен Михаил Моисеевпа Анисим Ильин студентсем тăрăшнипе пуçланнă. Вĕсем шкул çуртĕнче сцена ăсталаса А. Пушкинăн «Борис Годунов» трагедийĕнчи «Литва чиккинчи хупахра» сценкăна выляса панă. Нумай çынна савăнтарма, хумхантарма пултарнă хăй тĕллĕн вĕреннĕ тăрăшуллă артистсем. Çапла вара икĕ пуçаруçă ертсе пынипе Орининта драма кружокĕ йĕркелене кайнă.

Каярахпа драма кружокĕ «Хаярлăхпа юрату», «Хăв пурăнас тенĕ пек ан пурăн» пьесăсене халăх умне кăларнă. Вăл вăхăтра вара чăвашла çырнă пьеса тавраш пулман, çавăнпа та вырăсларан чăвашла куçарма тивнĕ.

1930 çулсем хыççăн колхозсем йĕркеленсе пынă май ялти культура вучахĕсем ытларах аталаннă. Ун чухне вара вулав çурчĕсем те уçăлма тытăннă. Ку вăхăтра Орининта тата Мулкачкассинче çĕнĕ клубсем хута кайнă ĕнтĕ. Орининти драма кружокне хастар çамрăк С. Павлов-Этмин ертсе пынă. Çав çулах Мулкачкасси ялĕнче драма кружокĕ ĕçлеме пуçланă. Ăна ялти учитель Т. Трофимов йĕркелесе янă. Чи малтан сцена çине «Упа» пьеса тухнă. Çак тапхăрта пуçланса кайнă та ĕнтĕ Орининпа Мулкачкассинчи драма коллективĕсен туслăхĕ тата пĕр-пĕрне ăмăртмалла спектакльсем лартасси.

1935 çулта Орининти драма коллективне Чăваш драма театрĕ хӳтлĕхе илнĕ. Унти ăста артистсемпе ытти специалистсем кунта тăтăшах килсе çӳренĕ, чылай енĕпе пулăшнă, сцена искусствине вĕрентнĕ.

1945 çултан пуçласа театр ушкăнĕ хăй тĕллĕн ăсталăх пухнă пултаруллă артистсемпе йышланать. Ăна вăрçăран аманса таврăннă салтак П. Андреев ертсе пыма пуçлать, вăлах клуб ертӳçинче те вăй хурать. Театр искусствине ăнланаканскер, юратаканскер хăй таврра пултаруллă çынсене пухса театр ĕçне малалла тăсать. Çав çулсенче Орининсем «Кай, кай Ивана», «Айтар», «Нарспи» тата ытти пысăк калăпăшлă, тарăн шухăшлă, кăткăс сюжетлă, тĕрлĕ жанрлă пьесăсене кун çути парнелеççĕ.

1962 çулта республикăра иртнĕ ялти драма коллективĕсен смотрĕнче «Нарспи» спектакльпе «Чи лайăх ĕçлекен драма коллективĕ» ятне тивĕçнĕ. 1963 çултан пуçласа мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен культура вучахне В. Васильев ертсе пынă. Театр аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн ăна Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă. 1965 çулта вара Пĕтĕм Раççейри художество пултарулăх коллективĕсен смотрĕнче «Ылтăн вăчăра» спектакльпе лауреат ячĕллĕ пулнă. 1969 çулта Атăлçи тата Урал тăрăхĕнчи Автономи республикисен наци халăх пултарулăхĕн театр искусствин творчествăлла конференцийĕнче çак ăста ушкăн Ф. Павловăн «Ялта» пьесси тăрăх лартнă спектакльне чи лайăххи тесе йышăннă. ЧР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе килĕшӳллĕн творчествăри çитĕнӳсемшĕн тата вăл никĕсленнĕренпе 50 çул çитнĕ май Орининти халăх театрне Хисеп грамотипе тата ЦК ВЛКСМ Хисеп грамотипе чысланă. 1974 çулта Чăваш телевиденийĕпе халăх театрĕсен фестивалĕнче Ф. Уяр çырнă «Шурча таврашĕнче» спектакле лартса лауреат ятне тивĕçнĕ. Вĕсене чысланă ырă ятсене асăнса та пĕтереймĕн, мĕн йышши кăна çук пулĕ кунта.

Халĕ вара чăннипех те сумлă уяв – театрăн çуралнă кунĕ, 95 çул – пĕр ĕмĕр. Çак сăлтав пухрĕ те ĕнтĕ шăмат кун пысăк йыша Культура çуртне. Уяв вара салам сăмахĕсемпе илемлĕ, кунта вĕсем вĕççĕр-хĕрсĕр пулчĕç. Сцена çине депутатсен районти Пухăвĕн ертӳçи çумĕ, Оринин ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн тата районти агропромышленноç комплексĕнчи вăй хуракан ветерансен канашĕн ертӳçи, «Росгосстрахăн» районти уйрăмĕн ертӳçи Валерий Вязов тухрĕ.

– Оринин халăх театрĕ – пирĕн хăпартлану, унăн ячĕ чăннипех те çӳллĕ шайра пулнине чылай ĕç-хĕл çирĕплетет. Хăйсем тĕллĕн ăсталăх пухнă артистсем культурăпа искусство енĕпе çунса тăрса халăх йăли-йĕркине упраççĕ, чăваш ятне çĕклеççĕ, апла пулсан вĕсене ырламалла. Малашне те тивĕçлĕ шайра тăрăшулăх тесен хамăр артистсене хавхалантармалла, – терĕ вăл.

Орининсем ĕçлеме те пултараççĕ, сцена ăсталăхĕ валли те вăхăт тупаççĕ. Апла пулсан вĕсенчен тĕслĕх илмелли пурах.

– Оринин ялĕ – чăннипех те театр сали. Аслисем каланă тăрăх вара театр ĕçне хутшăнман çын юлман та пулĕ кунта. Пуçаруçăсен ĕçне малалла та тивĕçлĕ шайра тăсар, çак ăсталăха çамрăксене те явăçтарар, – терĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Волков.

Енчен те ĕç-хĕле республика представителĕсем пысăка хурса хаклаççĕ пулсан малашне татах та ытларах тимлес килет. Оринин тăрăхĕнче Чăваш Республикинчи халăх пултарулăх çуртĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Тамара Шамсеева ĕçлĕ çул çӳревпе тăтăшах пулать. Унăн вĕрентĕвĕпе пулăшăвĕ вара питĕ вырăнлă.

– Эпĕ сирĕн ăсталăхпа чăннипех те мухтанатăп. Пĕлетĕп, эсир ятарлă пĕлӳ илнĕ артистсем мар, апла пулин те сирте пултарулăх, ĕçлес кăмăл тапса тăрать. Сирĕн пек маттурсем ытларах пулсан чăваш халăх культури хĕмленсе ялкăша тăрĕ, – терĕ вăл сцена ăстисен ĕç-хĕлне хакланă май.

Çавăн пекех черетлĕ салам сăмахĕпе Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕн артисчĕ, Чăваш Республикин халăх пултарулăх çурчĕн театр искусствин методисчĕ В. Григорьев, нумай çул Оринин халăх театрне хутшăннă Ю. Васильев, паянхи кун асăннă театрăн режиссерĕ, Чăваш академи драма театрĕн артисчĕ А. Андреев, «Районти ял тăрăхĕсем хушшинчи культурăпа кану центрĕ» муниципаллă бюджет учрежденийĕн информаципе методика центрĕн ертӳçи Н. Егорова тата ыттисем тухрĕç. Палăртма питĕ кăмăллă, çак халăх театрне хисеплекенсем питĕ йышлă. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш Республикин шайĕнчи тĕрлĕ представительсем, кӳршĕ районсенчи сумлă çынсем килсе çитрĕç саламлама. Уяв сĕтелĕ çинче Тав хучĕсемпе Хисеп грамотисем, салам çырăвĕсем, парнесем йышлă пухăнчĕç. Çакăн пек тимлĕх малашне татах та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать.

Сцена тулли халăх кăмăллакан артистсем, пăхма кăмăллă. Çакăнта, паллах, кунти ĕçе ертсе йĕркелесе пыракан Венера Васильевăна ырăпа асăнмалла. Ытти ялсенче вара хăш чухне тĕрлĕ концерт кăтартасси те йывăрлăх кӳрет, акă тĕслĕхре паян камсем. Куракансем умне артистсем «Ялта» тата «Манăн хĕрлĕ мăкăньăм» драмăсен, «Авлансан каччă пулаймăн» камит сыпăкĕсене тата «Тĕпсĕр сăпкари ача сасси» драма кăларчĕç.

Спонсорсене те ырăпа асăнмалла, тав тумалла. «Оринино» ял хуçалăх предприятийĕ, Оринин шкулĕ, Олег Николаев, Геннадий Михайлов, Муркашри БТИ, Елена Никитина пысăк пулăшу кӳчĕç.

Çапла умра каллех черетлĕ чĕнтĕрлĕ чаршав хупăнчĕ, эпир вара каллех Оринин халăх театрĕн артисчĕсене чăтăмсăррăн кĕтетпĕр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

# Инвалидсене те ĕçпе тивĕçтермелле

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн В. Путинăн 2012 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи «О мерах по реализации государственной социальной политики» Указне пурнăçланă май пирĕн республикăра инвалидсене ĕçпе тивĕçтерессипе те тĕрлĕ мерăсем йышăннă, вăл шутра вĕсене валли ятарлă оборудованипе тивĕçтернĕ ĕç вырăнĕсем хатĕрлессипе те.

2011 çулхи ноябрь уйăхĕнчен пуçласа Чăваш Республикин «О квотировании рабочих мест» саккунĕ пурнăçланать. Унпа килĕшÿллĕн организацире ĕçлекенсен хисепĕ 100 ытла çын пулсан унта инвалида ĕçе илме квота çирĕплетмелле. Вăл ĕçлекенсен вăтам шучĕн 2 процентĕнче танлашмалла.

2011–2012 çулсенче республикăри пур муниципалитетра та ĕçпе тивĕçтерекен центрсем вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тата прокуратура ĕçченĕсем хутшăннипе асăннă саккуна пурнăçласси пирки ятарлă канашлусем ирттернĕ.

Пирĕн районта 100 çын ытла шутланакан организацисем 12, анчах та ĕç вырăнĕсене аттестациленĕ хыççăн (ку ĕç вырăнĕнчи сиене палăртать) вĕсенчен улттăшĕнче кăна инвалидсем валли квота çирĕплетме май пулчĕ. Çапла вара инвалидсем валли пурĕ 20 ĕç вырăнĕ шутланнă, вĕсенчен 18-шне инвалидсене ĕçлеме илнĕ. Пурĕ районта 100 ытла çын шутланакан организацисенче 50 инвалид ĕçлет.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çулсерен тухса тăракан постановленийĕпе килĕшÿллĕн республикăра 501 е ытларах çын ĕçлекен организацисенче çирĕплетнĕ квотăпа инвалидсене ĕçе илме 2 ятарлă ĕç вырăнĕ йĕркелемелле, 100–500 çын пулсан – ятарлă пĕр ĕç вырăнĕ. Çапла вара ĕç вырăнĕсене инвалидсен сывлăх шайне, тепĕр майлă каласан, вĕсен ушкăнне шута илсе хатĕрлемелле.

Раççей Федерацийĕн «О социальной защите инвалидов» саккунне кĕртнĕ улшăнусемпе килĕшÿллĕн 2013 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче Чăваш Республикин 2011 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнчи 68 номерлĕ «О квотировании рабочих мест для инвалидов в Чувашской Республике» саккунĕн 2 тата 4 пайĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» 81 номерлĕ саккуне йышăнчĕç.

Саккунпа килĕшÿллĕн 35–100 çын ĕçлекен организацисенче инвалида ĕçе илмелли квота ĕçлекенсен вăтам хисепĕн 1,5 процентĕпе танлашмалла. Пирĕн районта кун пек предприяти пурĕ 17.

Çак çĕнĕлĕхпе предприяти-организаци ертÿçисене тĕплĕнрех паллаштарас тĕллевпе Муркашри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр çитес вăхăтра канашлу ирттерме палăртнă.

Ĕç рынокĕнчи йывăрлăха сирме тивĕç республикăри тĕллевлĕ программăсене пурнăçласа 2010 çултан пуçласа 2013 çулхи декабрь уйăхĕччен федераци тата республика бюджечĕсенчен уйăрнă укçа-тенкĕпе усă курса районти предприяти-организацисенче инвалидсене ĕç вырăнĕпе тивĕçтерме пурĕ 12 ятарлă вырăн хатĕрленĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен служба ĕçченĕсем çак ятарлă вырăнсене тĕрĕслессипе куллен мониторинг ирттереççĕ. Çакăн пек вырăнсем пушансан унта урăх граждансене – инвалидсене сывлăхне е, тепĕр майлă каласан, ушкăнне кура ĕçе вырнаçтарма тăрăшаççĕ.

Чăваш Енре çак ĕçе эффективлă йĕркелесе пыма вакансисен банкне туса хунă. Унпа Чăваш Енĕн ĕçпе тивĕçтерекен служби сайтĕнче, пирĕн районти ĕçпе тивĕçтерекен центрăн сайтĕнче те паллашма пулать. Кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кунта пурĕ 90 вакансии пулнă. Интернетпа усă курма пултарайманнисем çак информаципе ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче паллашма пултараççĕ.

2013 çулта республикăн ниçта та ĕçлемен, инвалид ача пăхса ÿстерекен инвалид ашшĕ-амăшĕсене, нумай ачаллисене ĕçпе тивĕçтерме пулăшакан ятарлă программи малалла ĕçлет. Çак тĕллевлĕ программăпа (ăна 2012–2015 çулсенче пурнăçлама палăртнă) килĕшÿллĕн пирĕн районта икĕ инвалид валли ятарлă ĕç вырăнĕ туса панă, унта оборудовани вырнаçтарнă. Çакна валли федераци тата республика бюджечĕсенче пăхса хунă укçа-тенкĕпе усă курнă.

Çакăн пек ĕç вырăнĕсем йĕркелеме тăкакланă укçана ĕç паракансене саплаштараççĕ: 3-мĕш ушкăн инвалид валли ĕç вырăнĕ йĕркеленĕшĕн 67 пин тенкĕ саплаштараççĕ, 2-мĕш ушкăн инвалид валли ĕç вырăнĕ йĕркеленĕшĕн – 75 пин тенкĕ.

2014–2015 çулсенче те çак ĕç малалла пырĕ. Республикăра пурĕ 106 инвалид валли ĕç вырăнĕ йĕркелеме 2014 çул валли 7,4 миллион тенкĕ, 2015 çул валли 7,7 миллион тенкĕ пăхса хунă. Çак мерăсем ĕç паракансене интереслентерессе шанатпăр.

Ĕç тупма пулăшу ыйтакан инвалидсене эпир Муркашри ĕçпе тивĕçтерекен центра Раççей Федерацийĕн «О занятости населения в Российской Федерации» саккунĕпе пăхса хунă патшалăхăн пур услугипе те тивĕçтеретпĕр.

Чăваш Республикин «Содействие занятости населения» патшалăх программипе килĕшÿллĕн 2012–2020 çулсенче инвалидсене ĕçсĕр çынсем валли вăхăтлăх йĕркеленĕ ĕç вырăнĕсене ĕçлеме вырнаçтармалла, вĕсене ĕç рынокĕнче кирлĕ професси алла илес тĕллевпе вĕренме ямалла, ĕç рынокĕнче социаллă адаптаципе психологи пулăшăвĕпе тивĕçтерекен программăсене явăçтармалла тата ытти те.

2013 çулхи 11 уйăхра Муркашри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центра 15 инвалид ĕç шыраса пулăшу ыйтрĕ, вĕсенчен 12-шне ĕçе вырнаçтарнă.

Инвалидсене ĕçе вырнаçтарассипе кăçалхи çур çул кăтартăвĕпе пирĕн республика Раççей субъекчĕсен йышĕнче 5-мĕш вырăнта. 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕçсĕр инвалидсем 746 çын шутланнă пулсан январĕн 2-мĕшĕ тĕлне вĕсем 555 çын пулнă.

Инвалидсене ĕç тупса парассинче, паллах, йывăр самантсемсĕр пулмасть. Акă ĕç паракансем инвалид çынна ĕçе илмелли вырăна инвалид çынна тупма йывăртарах професси пăхса хунă е ĕç паракансем инвалид çынна валли ĕç вырăнĕ пуррине вăхăтра пĕлтермеççĕ. Сăмахран, пирĕн республикăра квота шучĕпе 228 инвалида ĕçе вырнаçтарайман, анчах та маларах асăннă вакансисен банкĕнче паянхи куна 96 ĕç вырăнĕ пурри палă.

Пĕлме: республикăра пурĕ 92 пин инвалид пурăнать, çакă республикăра пурăнакансен 7,4 процентĕпе танлашать. Вĕсенчен 30 пин ытла инвалид ĕçлеме пултаракан ÿсĕмре. Медицинăпа социаллă экспертиза бюровĕн даннăйĕсем тăрăх 10 пине яхăн инвалидăн ĕçлеме рекомендаци пур, вĕсенчен 5,5 пин инвалид ĕçлет. Çапла вара 4,5 пин çын хальлĕхе ĕçсĕр юлать.

**И. ДИМИТРИЕВА,**
**Муркашри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ертÿçи.**

Тавралăха хÿтĕлемелли çулталăк

# Çĕнĕ çула – çĕнĕ чăрăш

Çĕнĕ çул уявĕччен вăхăт нумай та юлмарĕ: кашниех уява хатĕрленни палăрать. Район центрĕнчи тĕрлĕ çурт çинче те акă ир-кас илемлĕ çутăсем çунаççĕ.

Çак эрнере вара Çĕнĕ çулăн чи витĕмлĕ палли – симĕс чăрăш хăйĕн вырăнне «Сывлăх» ФСК умĕнчи лаптăкра йышăнчĕ. Ун çине тимлĕрех пăхсан малтанхи çулсенче пулман уйрăмлăха тÿрех асăрхама пулать – чĕрĕ йывăç касман.

– Кăçал Тавралăха хÿтĕлемелли çулталăк пулнине шута илсе эпир чĕрĕ чăрăш касас темерĕмĕр. Искусственнăй чăрăш туянма хамăрăн ял тăрăхĕн бюджетĕнчи укçа-тенкĕне тăкакларăмăр. Паллах, малаллахи çулсенче те çак чăрăша усă курма шутлатпăр. Чăрăшăн пайĕсене çирĕплетсе çак эрнере чăрăша пуçтарса лартрăмăр, кĕçех ăна илемлететпĕр. Хальлĕхе çанталăк питĕ çиллĕ тăнине пула чăрăша капăрлатман-ха. Ку ĕç техникин хăрушсăрлăхĕпе, апла пулсан сынсен хăрушсăрлăхĕпе сыхăннă. Çавăнпа та çанталăк лайăхлансанах чăрăш çине тĕрлĕ теттесемпе гирляндăсем çакатпăр. Вĕсене те хамăрăн бюджетра укçа-тенкĕ тупса туяннă, – пĕлтерчĕ Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Ермолаев.

Апла çитес вăхăтра 6 метрлă капăр чăрăш район центрĕнче Çĕнĕ çул сывхарса килнине ытларах палăртма пуçлĕ, иртен-çÿрене хавхалантарĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Вĕренÿ учрежденийĕсенче

# Ачаран хăнăхмалла



Ачасем кĕнеке вулама юратчăр тесен чи малтанах кашни ашшĕ-амăшĕн хăйĕн кĕнекепе, хаçат-журналпа туслă пулмалла. Нумай вуламалла, ачана та вуласа памалла. Вара ача итлеме, каярах вулама хăнăхать. Çапла хăй тĕллĕн вуласси те килĕшнĕ ĕç пулса тăрать.

Пирĕн ача садне çÿрекенсем кĕнекепе туслашчăр тесе эпир сахал мар ĕç пурнăçлатпăр. Акă «Умка» ушкăнра кĕнеке эрни питĕ хавхаланулă иртрĕ. Ачасем тĕрлĕ юмах тĕнчинче пулса курчĕç, юмахсенчи сăнарсене ÿкерчĕксенче кăтартса пачĕç. «Анне чĕри» ятпа вулакансен конкурсĕ те пулчĕ. Надежда Кириллова, Анна Христофорова, Полина Иванова, Эвелина Голубева тата Арсений Иванов вуланă сăвăсем жюрие ытларах кăмăла кайнине пĕлтерчĕç.

**Н. ПОРФИРЬЕВА,**
**Т. ТОЛСТОВА,**
**«Путене» ача сачĕн воспитателĕсем.**

# Пирĕн патра – паллă спортсмен

Хамăр тăрăхри паллă çынсемпе кашни ача тĕл пулса калаçма хавас. Иртнĕ эрнере «Путенери» «Аистенок» ушкăнра сывлăх эрни иртрĕ. Çак эрнене эпир çитес Олимпиадăпа та çыхăнтартăмăр. Çавăнпах хăнана Нина Охотникована чĕнтĕмĕр.

Нина – Раççей, Европа ăмăртăвĕсен çĕнтерÿçи тата призерĕ, 2011 çулхи Пĕтĕм тĕнчери çуллахи Универсиадăн бронза призерĕ. Вăл хăйĕн пĕрремĕш утăмĕсене аса илчĕ. Хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе паллаштарчĕ. Пысăк спорта çитес тесен питĕ нумай тăрăшмаллине каларĕ. Çак тĕл пулăва ачасемпе пĕрле амăшĕсем те хутшăнчĕç. Ăмăрту умĕн Нина ертсе пынипе пурте пĕрле хусканусем туса ÿтпĕве çемçетрĕç.

Çак тĕл пулура кашниех спортсменăн медалĕсемпе паллашма, вĕсене алла тытса пăхма пултарчĕ. Ачасем питĕ савăнчĕç.

**О. ПРОКОПЬЕВА,**
**воспитатель.**

Астăвăм

# Халăх асĕнче пурăнма тивĕç

Илемлĕ те янăравлă юрăсемпе пуçланчĕ ЧАССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне Василий Соловьева халалланă астăвăм касĕ. Шурчари Культура çуртне В. Соловьева астăвакансем, ăна хисеплекенсем нумаййăн пухăнчĕç. Вĕсемпе пĕрле «Астăвăм вăхăтран вăйлăрах» ятпа иртнĕ астăвăм касне район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов та хутшăнчĕç. Районăн Хисеплĕ çыннисем В. Вязовпа В. Краснов та çак мероприятие килни не ăнсăртран мар: вĕсем те ял хуçалăхĕпе тачă çыхăннă çынсем. В. Вязов 1990–1996 çулсенче «За коммунизм» (халĕ «Оринино» хуçалăх) колхоз председателĕ пулнă, чылай çул район администрацийĕнче ертсе пынă, В. Краснов 1979–1990 çулсенче компарти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче вăй хунă, маларах ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕнче те тăрăшнă, вунă çула яхăн «Передовик» колхоза, каярах совхоза ертсе пынă... Астăвăм касĕнче «Герой» хуçалăхăн ертÿçи Г. Иванова та пулчĕ.

Шурчара пурăнакан С. Тимофеева Василий Егоровичăн ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ (**Ред.**: хаçат вулакансем ун пирки хаçатăн кăçалхи 91–92 номерĕсенче вуласа пĕлме пултарчĕç). «Герой» хуçалăха 15 çул ертсе пынă В. Соловьев умри йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса халăхшăн чăнах та тăрăшнине, тимленине палăртса Светлана Семеновна ăна Муркаш районĕн Хисеп кĕнекине кĕртме сĕнчĕ. Кунпа çынсем пурте килĕшрĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Василий Егоровичăн тивĕçлĕ ĕçне асăнса çак сĕнĕве çитес вăхăтрах пăхса тухма шантарчĕ. Ростислав Николаевич астăвăм касĕ шăпах В. Соловьев вăхăтĕнче 30 çула яхăн каялла тунă Культура çуртĕнче иртнине аса илтерчĕ, сумлă ентешĕн ĕçне паян та, малашне те тăсмаллине палăртса каларĕ.

В. Красновпа В. Вязов тухса каланинчен В. Соловьев вĕсен юлташĕ, ĕçтешĕ тата яланах вĕсемпе пĕр шухăшлă çын пулни палăрчĕ. Çирĕп тĕллевлĕ, темĕнле йывăр лару-тăруран та тухма пултаракан, сăмахпа мар, ĕçпе палăрса тăракан, халăха ертсе пыма пултаракан çын – çапла сăнарларĕç ăна аксакалсем.

– Василий Егорович ял тата район аталанăвне питĕ пысăк тÿпе хывнă. Вăл чăнах та районăн Хисеп кĕнекине кĕме тивĕçлĕ çын. Эпĕ ăна сума суса мемориал хăмине уçма та, «Герой» хуçалăх çитес çул 50 çул тултарнине шута илсе ятарлă брошюра туса хатĕрлеме те сĕнетĕп, – терĕ Валериан Семенович.

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн çумĕ В. Вязов панă сĕнÿсем те питĕ вырăнлă, питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине каламалла. Валерий Иванович район энциклопедине хушса çĕнĕрен кăларма сĕнчĕ.

– Мĕншĕн тесен питĕ хастар çынсем, энциклопедие кĕме тивĕç çынсем, вăл шутра В. Соловьев та, хальхи энциклопедире, шел пулин те, çук. Çакăн пек çынсене пирĕн манма юрамасть. Малалла та район тăнăç аталантăр тесен В. Соловьев пек хастар кадрсем хатĕрлемелле, çамрăксене çакăн пек тĕслĕхсемпе ÿстермелле. В. Соловьев Социализмла Ĕç Геройĕн Е. Андреевăн ĕç опытне чылай вĕреннĕ, ăна хăйĕн ĕçĕнче усă курса хуçалăха аталантарнă. Пирĕн вара ку таранччен тунине упраса хăвармалла, производствăна ытларах аталантармалла, – терĕ вăл.

«Герой» хуçалăх ертÿçи Г. Иванова тата ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов та хăйсен пултарулă ентешне яланах асра тытса вăл пуçланă ырă традицисене вырăнта аталантарса пыма шантарчĕç.

Астăвăм касĕ Шурчари тĕп шкулăн музейĕнче малалла тăсăлчĕ. Кунта – вырăнти истори, вырăнти культура – пуянлăх. Культура çуртĕн залĕнче вара алă вăйне висекенсен хĕрÿ ăмăрту иртрĕ. Библиотекăра çавра сĕтел тавра ĕç ветеранĕсем В. Соловьев çинчен аса илчĕç. Астăвăм касĕ концертăн иккĕмĕш пайĕпе вĕçленчĕ. Халăх киле саланма васкамарĕ – пĕр-пĕринпе чуна уçса калаçмалли кашнийĕнех нумай пулчĕ.

**С. ТРОИЦКАЯ,**
**Шурча ял библиотекин ертÿçи.**

# Кашни çĕр участокĕн тĕллевĕ пур

**Росреестр асăрхаттарать**

Паян харпăрлăха çĕр илесси кун йĕркинче анлă тăрать. Анчах мĕнле ĕçсем тусаирттерме юрать вĕсем çинче тата çав çĕр пайĕсемпе мĕнле тĕллевпе усă курмалла? Çĕр илекенсем час-часах çак ыйтусен хуравĕсемпе интересленмеççĕ. Çавна пулах вăхăт иртсен вĕсен саккун умĕнче явап тытмалла пулса тухать.

Пуриншĕн те паллă, çĕр ыйтăвĕ пурнăç аталанăвĕн кирек хăш тапхăрĕнче те тĕп вырăнта пулнă. Вăл хăйĕн пĕлтерĕшне паян та çухатман.

Хальхи вăхăтра пурăнмалли çурт-йĕр çавăрма çĕр участокĕ илекенсем унта час-часах техобслуживани станцийĕсем е шиномонтаж мастерскойĕсем уçнине курма пулать. Çак утăм – саккуна сĕмсĕррĕн пăсни. Ялсенче пурăнакансем те çакна кураççĕ, асăрхаççĕ. Çавăнпа та ял-хуласенчен хăйсен кӳршисем çĕр участокĕпе тĕллевсĕр усă курни пирки Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленийĕн патшалăх çĕр надзорĕн пайне пĕлтернисем нумайланчĕç.

Малтанах çĕрпе усă курас тата ун çинче çурт-йĕр çавăрас йĕрке пурри пирки асăрхаттарса хăварас килет. Унпа килĕшӳллĕн çĕр лаптăкĕсене усă курас тата çурт-йĕр çавăрас йĕркепе ял тăрăхĕсемпе хула округĕсене тĕрлĕ тĕллевпе усă курмалли лаптăксем çине пайлаççĕ. Вĕсем: пурăнмалли вырăн, обществăпа ĕç хутшăнăвĕсем валли пăхнисем, производство лаптăкĕсем т. ыт. те. Вĕсен чиккисене ял-хула йĕркелĕвĕн тата пайлавĕн картти çинче палăртаççĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн пурăнмалли индивидуаллă çурт-йĕр строительствин зонинче уйрăм çынсен техобслуживани станцийĕсем е шиномонтаж мастерскойĕсем уçма юрамасть. Анчах практикăра çĕр участокĕсене пурăнмалли çурт-йĕр çавăрма илнĕ граждансем вĕсемпе тĕллевлĕ усă курманни тĕл пулать.

Нумаях пулмасть Шупашкарти Добролюбова, Тельман, Крупская ячĕллĕ урамсенче пурăнмалли индивидуаллă çурт-йĕр çавăрма тесе илнĕ çĕр лаптăкĕсенче автотранспорт хатĕрĕсене ваккăн юсамалли тата пăхса тăмалли пунктсене уçнă. Саккуна пăснă тĕслĕхсенче Росреестр сотрудникĕсен вĕсен хуçисене административлă майпа явап тыттарма тивнĕ. Йĕркене пăсса саккун умĕнче явап тытиччен, ман шутпа, граждансен çиччĕ виççе шутласа пăхмаллах. Кунашкал тĕслĕх пулсан вĕсен хуçисен саккунпа килĕшӳллĕ пурăнас тесен çĕр участокĕсемпе усă курмалли йĕркене саккун шайне çитермелле.

2013 çул пуçланнăранпа Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленийĕ вырăнсенче çĕрпе саккунпа килĕшӳллĕ усă курни тĕлĕшпе 5400 тĕрĕслев ирттернĕ. Çак тĕрĕслевсенче граждансем йĕркене пăснă 2063 тĕслĕх çиеле тухнă. Ытларах чух çĕрпе никам ирĕк памасăр усă курни тата çĕр тĕлĕшпе официаллă документсем хатĕрлесе çитермесĕрех ĕçлени палăрнă. Йĕркене пăсакансене административлă майпа пĕтĕмпе 1152,9 пин тенкĕ явап тыттарнă.

Кăçалхи тĕрĕслевсем ытларах Çĕнĕ Шупашкар хулинче, Шупашкар, Шăмăршă, Çĕрпӳ, Улатăр районĕсенче пулнă. Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленийĕ патшалăх çĕр инспекторĕсем Тăвай, Пăрачкав, Йĕпреç, Канаш, Муркаш, Вăрнар районĕсенче тата Шупашкар хулинче çирĕпрех ĕçленине палăртать.

**Л. ПЕТРОВА,**
**Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленийĕн Муркаш районĕнчи пайĕн пуçлăхĕ.**




Регионально-информационный центр сети КонсультантПлюс
ООО «Фирма «Элис» ул. Нижегородская, 4.Тел.:(8352) 62-35-15


**Программăсене вăя кĕртсе**

# Ял хуçалăх ыйтăвĕ тавра

Çак кунсенче Чăваш Республикин наци библиотекинче «Фермер ĕçне пуçăнас текенсене 2012 – 2014 çулсенче пулăшу парасси» тата «2012 – 2014 çулсенче хресчен (фермер) хуçалăхĕн бази çинче çемье ферми йĕркелесси» ведомствăн тĕллевлĕ программисем епле пурнăçланнине тишкересси тавра канашлу иртнĕ. Унта пирĕн район представителĕсем те хутшăннă. Вĕсем хушшинче район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем, грант илнĕ хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисем пулнă.

Асăннă программăсем вăя кĕрсе пынă май фермăсем çурчĕсене çĕнĕрен çĕкленĕ тата реконструкциленĕ, çамрăк выльăх, технологи оборудованийĕ, техника туяннă, çавăнпа пĕрлех инфраструктурăпа коммуникаци сечĕсем аталаннă. Чăваш Республикин «Агро-Инноваци» хысна унитарлă предприяти специалисчĕсем асăннă программăсемпе консультаци ĕçĕсем ирттереççĕ. Бизнес-план тата конкурс документацийĕсем йĕркелеме пулăшаççĕ.

Асăннă предприяти ертӳçи Николай Васильев палăртнă тăрăх ферма çуртне реконструкциленĕ чухне йăнăш чылай тĕл пулать. Выльăх-чĕрлĕх сарайĕ чи малтан выльăхшăн меллĕ пулмалла. Инвестици тапхăрĕнчеперекетлĕх пирки ытларах тăрăшни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Вăл палăртнă тăрăх выльăха ирĕкре çӳретни, кăкарса тăратнипе танлаштарсан, ăнăçлăрах шутланать. Вĕсен йышĕ пысăк пулнине пăхмасăр çак мелпе анлăрах усă курма тăрăшмалла. Вăйлă аталаннă çĕр-шывсенче выльăх-чĕрлĕхе ирĕкре çӳретесси çине куçнă та ĕнтĕ.

Çавăн пекех Николай Васильев ытти саманта та асăннă. Выльăха апат памалли вырăна тăтăшах малтанхи тасамарлăх юлса пырать. Унта пухăнакан нӳрĕк тата тĕрлĕ каяш çĕнĕрен хурса панă апата пахалăхсăрлатать. Çутăпа уçă сывлăш та выльăх-чĕрлĕхшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ, кирек хăш вăхăтра та вăл пĕр чăрмавсăр хăйне кирлĕ чухлĕ выртма пултармалла. Ĕне мĕнле условире пулни унран продукци ытларах илесси, çакăнпа пĕрлех фермер хуçалăхĕн ăнăçлăхĕ тачă çыхăннă.

**Р. МАКАРОВА.**

**Пирĕн пата çыраççĕ**

# Тĕл пулу асра юлĕ

Ачана кĕнеке вулама юратма вĕрентесси – питĕ йывăр та кăткăс ĕç. Кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухне кĕнеке аван вулакан ачасем те аслă классене куçсан вулав çине тимлĕх уйăрасшăн мар. Яшсемпе хĕрсем ытларах Интернетра ларма кăмăллаççĕ. Программа вара ачасен пĕлĕвне Интернетра «ишме» пĕлнине тĕрĕслемест çав. Паллах, Интернетра та вулама пĕлекенсем валли кирлĕ материал сахал мар. Анчах ача кĕнекене алла илсе вуланине çитесси нимĕн те çук.

Çакна тĕпе хурса Çатракассинчи вăтам шкулта декабрĕн 5-мĕшĕнче тĕлĕнмелле паха тĕл пулу иртрĕ. Пирĕн шкула Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши килсе курма кăмăл турĕ. Тĕл пулура ачасем писатель пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç, ыйтусем парса кăсăкланчĕç, кĕнекесем туянчĕç. Шкулти пĕчĕк артистсем чаплă хăнана илемлĕ юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

Халăх писателĕ те парăмра юлмарĕ: шкула кĕнекесем парнелерĕ. Чылай ача вара автографлă кĕнекепе пуянланчĕ.

Писательпе куçа-куçăн çакăн пек тĕл пулни ачасен асĕнче чылайлăха юласса шанас килет. Шкул ачи автографлă кĕнекене нихăçан та манмĕ, çине-çинех алла илсе кăсăкланĕ.

**С. ФЕДОРОВА.**

Çатракасси шкулĕ.

# Шупашкар артисчĕсем ан çилленччĕр те...

Эпир, Ярапайкасси тăрăхĕнчи çынсем, Муркашри ветерансен хорĕн концертне курнă хыççăн çак сырăва çырмасăр чăтаймарăмăр – тав сăмахне район халăхĕ илтмелле хаçат урлах калас терĕмĕр.

Тĕлĕнмелле пултаруллă ветерансем, сире ĕмĕрĕпех сцена çинче юрласа пурăнă теме пулать, анчах эсир районта тĕрлĕ ĕçре ĕçленине пĕлетпĕр, атту пулсан калама та майĕ пур.

Çур концерт концерта ертсе пыраканран килет теççĕ. Çак сăмах Нина Петрова пиркиех пулĕ. Ăшă кăмăлпа, уçă сасăпа, илемлĕ сăмахсемпе концерта питĕ килĕшӳллĕ ертсе пычĕ. Сăмах май каласан вăл сцена çинче анчах мар, ахаль пурнăçра та питĕ ырă кăмăллă, сăпайлă хĕрарăм.

Юрий Жуков пирки калама вара ырă сăмахсем тупса та çитерейес çук. Çав тери пуян, тĕрлĕ енлĕ, çыпăçуллă, интереслĕ программа хатĕрленĕ. Мĕн чухлĕ вăхăт, чăтăмлăх, чи кирли – талант кирлĕ çакăн пек концерт программи йĕркелеме тата пултаруллă çынсем тупса пĕр çемье пек коллектив туса хума. Тавах сире, Юрий Нестерович!

Муркашри арçын ветерансенчен питĕ тĕлĕнтĕмĕр – мĕнле уçă сасăллă! Шупашкар артисчĕсем ан çилленччĕр те, Муркашсене курма интереслĕрех тесе лартăмăр эпир, зала пухăннисем. Кун пек концерта ир пуличчен те курма хавас.

Юратнă та хисеплĕ ветерансем тата вĕсене пĕрлештерсе ертсе пыракансем! Сире чĕререн тав сăмахĕ калатпăр, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Çакăн пек питĕ килĕшмелле лайăх концертсемпе тата нумай çынна савăнтармалла пултăр. Эпир вара Ярапайкассинче сире татах кĕтетпĕр.

**Халăх ыйтнипе П. СОРОКИН.**



# Сăвă-калав çырма кăмăллакансен страници



## Савнине

Юрласа парам-и çепĕç юрă
Сар хĕвел пек хамăн савнине?
Ĕмĕр-ĕмĕр эсĕ сывă пурăн.
Ах, савниçĕм, эс пĕртен пĕрре.

Ăнăçу та çут телей сунатăп
Йăлтăр çăлтăр пек савниçĕме.
Пĕр-пĕрне куçран пăхса кулар-и?
Ах, савниçĕм, эс пĕртен пĕрре.

Тав туса ачашшăн çупăрлатăп
Хӳхĕмлĕ чечек пек савнине.
Савăнса кăна пĕрле пурнар-и?
Ах, савниçĕм, эс пĕртен пĕрре.

Мĕнле пулмăп эпĕ тараватлă
Хамăн пĕртен-пĕр савнипеле?
Ай-хай, тусăм, пĕрле пурăнмашкăн
Турри пилне патăрччĕ пире.

**Геннадий ИВАНОВ.**

Ятман ялĕ.

## Тăванăмсем

**(Инçетри пиччеме халаллатăп)**

Çитĕнсе çитсе çула тухсан:
– Ăслă эпĕ, – терĕм аннене.
– Вăйлă эпĕ, – терĕм аттене, –
Ятăра эп ямăп сирĕнне.

Шав çыру яратăп инçетрен.
Ан йĕрсем, анне, эс каççерен,
Ан кулян, атте, эс кунсерен.
Ĕнтĕ эпĕ мĕскĕн мар пĕччен.

Пурăна киле эп мăшăр тупрăм,
Ман çемье халь хамăн – тав Турра.
Час-час пырайманшăн каçарсамăр,
(Шахвăртатăп çав) мĕнле
пурнатăр?

Ăслă мар хĕвре диплом пулсан та,
Вăйлă мар вăкăр манран супсан та.
Эпĕ тăвансемсĕр – хĕсĕр чун,
Хĕвеллĕ çут кун та – тĕссĕр кун.

**Ӳрмек Ваçли.**

## Пĕччен чух

Пĕччененех килте ларатăп
Кичемпе аптăраса,
Кĕнеке алла тытатăп
Вăхăт ирттерес шутпа.

Мĕн тата тăвас-ши манăн?
Каçчен вăхăт сахал мар.
Çывăрас мар-ши пĕр тапхăр
Е яшка лартса ярас?

Кĕнеке вуламаллаччĕ –
Тем-çке вуласах килмест.
Сочинени çырмаллаччĕ –
Тем паян пуç ĕçлемест.

**ТАТЬЯНА.**

## Пĕр сас паллипе пуçланакан сăмахсемпе çырнă кĕске калавсем

### Пулăра

Паян Петĕр пиччепе Павăл пулăра пулчĕç. Пиччен пулăра пурĕ пилĕк пулă пулчĕ, Павăлăн пĕр партас пулă пур. Петĕр пичче Павăла пĕр пысăк пуллине пачĕ. Павăл пиччене пулăшăн пĕчĕк пукан парнелеме пулчĕ.

**Петр ЗАЙЦЕВ.**

### Арманта

Антун армана анчĕ. Анна аппа армана анасшăнччĕ, анчах асанне аптăранă. Анна аппа арçын ачана арман авăрттарчĕ. Антун анаталла анчĕ. Анна аппа Антуна арман авăртнăшăн апатлантарчĕ.

**Снежана МУЗЫКОВА.**

### Кĕркунне

Кулине кукамай кăмпана кайрĕ. Кукаçи кăмпана каймарĕ. Килте Кĕркури куккапа кишĕр, кăшман кăларчĕ, кайран купăста касрĕ. Каçалапа Кулине кукамай киле килчĕ. Карçинккари кăрăççене кукаçипе куккана кăтартрĕ. Кукаçи карçинккари кăмпасене кăмăлларĕ.

**Лия БЛИНОВА.**

Атапай шкулĕ.

## Эпир лартнă хурăнсем

Эпир лартнă хурăнсем
Вăш çилпе кашлаççĕ,
Пĕтĕм таврана вĕсем
Хăт-илем кĕртеççĕ.

Мăкăль-мăкăль кăмписем
Шăкăрин лараççĕ,
Авă ӳркенменнисен
Кунтăксем тулаççĕ.

Шăрăх çу кунĕсенче
Сулхăна чĕнеççĕ.
Каç пулсассăн каччăсем
Хĕрсене кĕтеççĕ.

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**

Якаткасси ялĕ.

## Желаем вам добра

Бросай столетиям простое,
Мысль гениальная проста.
Важно нам творчество живое,
И дорог мир, а не война.

Вот радостно – ну как проказник
Стремительно плоть обретя
Декабрьский явился праздник
На третье к нам число влетя.

Вас, инвалид, мы поздравляем,
И в этом славном торжестве
Чтоб сбылись планы все, желаем –
Исполнились как в волшебстве!

**Валерий ГРИГОРЬЕВ.**

Йӳçкассинчи интернат çурчĕ.

## Шухăшсем

Улшăнатпăр çулран-çул эпир,
«Мĕн кĕтет умра?» – тесе шутлатăн.
Çывăрса тăрсассăн кашни ир
Турăран та пилĕхне ыйтатăн.

Тăнлавсем тăм ӳкнĕ пек шурсан
Урăхла эс пурнăçа хаклатăн.
Ĕмĕр саккипе нумай утсан
Тунă йăнăшсем пирки шутлатăн.

Хăш тĕлте эс ӳкнĕ ăнсăртран,
Вăл тĕле тӳшек сарса хураттăн.
Каярах юлса-и пурнăçран –
Васкарах, паллах, эсĕ утаттăн.

Шăпуна тупсан юратура
Урă куççемпе ăна хаклаттăн,
Пурнăç паракан хура-шуртан,
Тен, айккиперех иртсе каяттăн?

Ун пекки пулмасть иккен, пулмасть!
Кĕске ĕмĕр вăл пĕрре кăна.
Йăнăш вăл тумасăр курăнмасть,
Тӳссе ирттермех тивет ăна.

**Петр ВОРОБЬЕВ.**

## Хумла, Шупашкарăм

Тăван Шупашкарăн манми каçĕсем,
Шур Атăл – çĕн тинĕс, кăтра хумĕсем.
Çĕр-шывăн илемĕ тулли сăнпала
Чуна тыткăнларĕ, çĕклет кăмăла.

Хумла, Шупашкарăм, çĕн тинĕс, хумла!
Кивви иртсе кайрĕ, юлать хыçала.
Хумла, Шупашкарăм, тивлет çĕн çула!
Сана кăмăлларĕ яш-кĕрĕм, хула.

Каç кӳлĕм анатăп ĕçрен таврăнсан,
Куратăп асамлăх сана сăнасан.
Кĕрле, Шупашкарăм, çĕкле тăвăлна,
Чапа эс кăлартăн хăв хĕр-ывăлна.

Вылять ăшă çил, лăпкăн тинĕс канать,
Шыври карапсен çутисем бухтăна
Чĕр кĕмĕл яр! сапнă, илем сăнама.
Çĕн тинĕс, хум çийĕн юхтар юррăма.

Тăван Шупашкарăн манми каçĕсем,
Асамлă çĕн тинĕс, кăтра хумĕсем.
Çĕр-шывăн илемĕ тулли сăнпала
Чуна тыткăнларĕ, çĕклет кăмăла.

**Папак Мишши.**

## Пĕр упрар юратăва

*Сăвви Игорь Майковăн* *Кĕвви Виталий Романовăн*




### Çĕнĕ юрă

1. Хĕм сапса пиллерĕ çăлтăр
Шăплăхра савса пире:
– Юратса телейлĕ пулăр,
Юратсан тĕнче хитре.

Хушса юрламалли:
Сӳнми туйăмпа савар-и,
Савнă тусăм, пĕр-пĕрне?
Манăçми чунра упрар-и
Çутă çăлтăрăн пилне?

2. Çурхи кун епле илемлĕ
Сар хĕвел шевле сапсан.
Ман чĕрем тапать телейлĕн,
Чун савни, эс йăл кулсан.

3. Ĕмĕтсем çунат параççĕ
Вăйланса юратупа.
Санпа çеç ялан утасчĕ
Такăнмасăр пĕр çулпа.

## Шăпчăксем юрланă чух

*(Юрă)*

Шăпчăк юрлать юррине
Шурă хурăн çийĕнче,
Хĕрсем юрлаç юррине
Каçхи вăйă картинче.

**Хушса юрламалли:**
Ах, чĕрем, çунать, çунать,
Савни, саншăнах çунать.

Шăнкăр-шăнкăр çăл куç юхать,
Выртса ĕçессĕм килет.
Чун савни вăййа килмест,
Выртса йĕрессĕм килет.

**Хушса юрламалли**

Пуйăс кайрĕ хашлатса,
Хура тĕтĕм кăларса.
Савни килчĕ йăл кулса,
Хут купăсне вылятса.

**Хушса юрламалли**

Уйăх тухсан каçхине
Çуталаççĕ çăлтăрсем,
Савни купăс каласан
Савăнса ташлаç хĕрсем.

**Хушса юрламалли**

**Роза СОЛОВЬЕВА.**

Çатракасси ялĕ.

## Хăлхасăр, куççăр вăрманта

*(Повесть сыпăкĕ)*

**(Малалли. Пуçл. 92 №).**

Татах ик-виç предприятие, хуçалăх органĕсене çитсе пăхрĕç апăршасем, уççи-хуппи пулмарĕ.

«Çитĕ паян сулланса çӳресе», – йӳççĕн пăнчă лартрĕ Кĕçтук, вара çамрăксем Советсен çурчĕ умĕнчи сквера кайрĕç те пĕр вăрăм тенкел çине пырса ларчĕç.

Малалла мĕн тумалла? Ялах таврăнмалла-и?

«Э, çу-у-ук, – шалтан алли-урине тĕревлесех касса татрĕ Кĕçтук, – хулара ĕçе вырнаçмасăр яла таврăнмастăпах. Ыран каллех ĕç шырама пуçлатăп...».

Улатимĕр унпа пĕрлех пулма сăмах пачĕ.

Тĕттĕмленчĕ пулин те, хĕвелĕн хĕрлĕ шанĕ ката хĕрринех тĕкĕнменччĕ-ха.

Анчах ăçта çĕр выртмалла-ха? Килен-каянсен çуртне вырнаçма ытла та тăкаклă (йышăнĕç-и-ха тата унта ялтан килнĕ кашни çамрăка, кăнтăр-кăнтăр ĕç шыракана?).

Улатимĕр пĕлет: С.М. Киров ячĕллĕ поселокра унăн темиçе туратри тăванĕсем пурăнаççĕ, анчах вĕсен урамне те, çуртне те ас тумасть (вĕсем патĕнче тăван амăшĕпе хăй шкула кайнă çул çеç пулнăччĕ).

Каччăсем юхан шыв портĕнчи пристаньре каç каçлас терĕç. Кайрĕç вара çавăнталла çуначĕсене çĕклеме хăймасăр, паянхи такăчăкпа самаях лутăрканнă кăмăлпа. Çула май лавккасене кĕркелесе каçхи апат тумалăх хура çăкăр, сĕт, килька илчĕç, çакăншăн кашни 90-шар пус расхутланчĕ.

Темле майпа вĕсен çулĕ Н.Г. Чернышевский ячĕллĕ урампа та выртрĕ. Сĕнкĕлтететчĕç-ха вĕсем хĕлхемсĕр сăмахсемпе перкелешсе.

Сасартăк умра, вĕсен çулĕ çинче, тротуарсăр, лапам, лапка хăвăллă, çын куçхăлхисĕр вырăнта, чикан майрисем курăнса кайрĕç. Тăваттăн хăйсем. Хура тутăрлă, хура-тĕксĕм çӳхе пиншаксемпе, тĕрлĕ чечеклĕ, хаклă, тĕксĕм кăвак материрен çĕленĕ аркисем вăрăмăшĕпе çĕрех тĕкĕнеççĕ.

Самант – çаксем юпахсен çулне пӳлчĕç те хучĕç.

– Çамрăк çынсем, эсир инкеке лекнĕ, сирĕн чĕресене хуйхă-суйхă, пурнăç ăнманлăхĕ пусса лартнă, – «пăталарĕ» хуп-хура куçĕпе Кĕçтукпа Улатимĕре хĕрарăмсенчен пĕри, ватăраххи.

Çамрăксене хăйсене ку каламасăрах паллă-ха, анчах ют çын хăйсен шалти кăмăл-туйăмне çапла пĕтĕмпех, вăш-ваш «таварса кăтартни» вĕсене самаях тĕлĕнтерчĕ. Çакна кура, хĕрарăмсем юн шăршине сиснĕ тискер кайăк хаярлăхĕпех хăпартланса кайрĕç.

– Хăвăрăн малашлăхри кун-çулăр пирки пĕлес килет-и? – куçĕсене тискер кайăк çаткăнлăхĕпех çутăлтарса илчĕç халĕ вĕсем. Эпир сире пулăшма пултаратпăр...

Унтан хурав кĕтсе илмесĕрех каччăсене пĕр-пĕринчен уйăрчĕç те хăйсенчен ыйтмасăрах вĕсене икĕ тĕле çавăтса кайса тăратрĕç. Кашнин патне икшер хĕрарăм пырса тăчĕ.

Чи малтанах хĕрарăмсенчен пĕри Улатимĕрĕн çӳçне подполькăлла кастарнă пуçĕ çинчен пĕр çӳç пĕрчи шăт! татса илчĕ те хăйĕн сулахай ал лаппи çине хучĕ.

– Çак çӳç пĕрчинче халĕ санăн пуласлăх, – куçа йăммасăр тăрăнчĕ вăл каччă çине. – Ун тăрăх эпĕ куçа курăнман вăйсене чĕнсе илетĕп. Вĕсем сана пулăшчăр тесен, санăн вĕсен кăмăлне çĕклемелле, вĕсене парне памалла. Хур çӳç пĕрчи çине укçа!

Улатимĕр пур-çук укçапа – паянхи пĕртен-пĕр пурнăç çăл куçĕпе – сыхăннă кĕтмен-туман япала сиксе тухнипе çухалсах кайрĕ, пĕр авăк чĕлхесĕрленнĕ пек чĕмсĕр тăчĕ, вара, ним тума пĕлмесĕр, курткин малти кĕсйинчен ытти укçинчен çырткаламаллисем туянма уйăрса чикнĕ 1 тенкине васкамасăр, хăйне хисте-хисте, питне-куçне хаяр чĕпĕтекен пăрăç чăмланă пек йӳçĕхтерсе-пĕркелентерсе кăларчĕ те хĕрарăмăн ал лаппи çине, çӳç пĕрчи çине хучĕ.

– Ку сахал! – «майран пăрсах», хыттăнах «тапăнчĕ» каччăна сассипе иккĕмĕш хĕрарăмĕ.

Улатимĕр ĕнтĕ хăй чăннипех юлашки çăкăр таткисĕр юлма пултарасса ăнкарса илчĕ, вара, этемĕн хăйне сыхлас инстинктне парăнса, ытти укçи çинчен тĕрĕссине пытарас терĕ.

– Урăх çук манăн укçа, – хăйне хăй пусăхласах хăйĕн пурнăçĕнче пĕрремĕш хут хăюллăн суйрĕ вăл.

Ан суй! – сассине хăпартсах ячĕ иккĕмĕш хĕрарăмех. Пур санăн укçа! Шăлаварун хыçалти вĕче кĕсйинче вăл!

Хĕрарăмсем пĕлеççĕ пуль çав арçынсем укçисене ытларах чухне ăçти кĕсйине чиксе çӳренине, анчах çамрăкшăн ку каллех тĕлĕнмелле япала пулчĕ. «Ай-уй, ăçтан пĕлет вăл манăн укçа хăш кĕсьерине?» – хурав кĕтмесĕр ыйтрĕ вăл хăйĕнчен хăй, вара ку хĕрарăмсем чăннипех асамçăсем пулни пирки пач иккĕленме пăрахрĕ. Халĕ Улатимĕр, шалтан тăрмаланса, «ик вут хушшинчех çунма» пуçларĕ: «Мĕн тумалла? Мĕн тумалла? Кăлармалла-и укçа е çук-и?».

– Укçана кăларса хумасан çакăнтан вунă утăм тусанах сана хĕп-хĕрлĕ юн тинĕс хумĕ пек хупласа хурĕ, татах тепĕр икĕ кунтан кăнса выртăн! – юмахри шăпăр çине ларса вĕçсе çӳрекен тухатмăш карчăк куçĕпе «пăталасах» лартрĕ пĕрремĕш хĕрарăмĕ.

Улатимĕр халĕ чăннипех сехĕрленсе ӳкрĕ, лачăрах кайрĕ.

**Малалли пулать.**

# Кил тата хушма хуçалăх



**Тăвата сехетрен çиме пулать**

2 кг купăста, 4 шăл ыхра, 2 кишĕр, 1 кăшман илмелле. Çак çимĕçсене вĕттĕн тураса хутăштармалла. Маринада çапла хатĕрлемелле. Пĕр стакан вĕрекен шыв çине 0,5 стакан сахăр, çавăн чухлех тип çу тата 6 процентлă уксус кислоти, пĕр апат кашăкĕ тăвар хушмалла. Купăста çине маринад янă хыççăн 4 сехетлĕх пӳлĕмре лартмалла.

# «Ĕнесене килтех пĕтĕлентерме май пур»

**Çĕнĕлĕх – килти хушма хуçалăх тытакансем валли**



***Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци коллективĕ хăйĕн ĕçне пурнăç ыйтнипе тан илсе пырса кун йĕркине тухнă çĕнĕлĕхсенчен пĕртте юлмасть. «Хресчен туса илнĕ уй-хир продукцийĕ выльăх-чĕрлĕх витĕр кăларсан кăна ытларах тупăш парайрать. Çакна ăнланса ял çынни çĕр-шыв экономикинчи йывăрлăхсемпе кĕрешсе килти хушма хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе умри тĕллевĕсене пурнăçлама çемье бюджетне вăйлатать», – тет станци пуçлăхĕ Николай Яковлев. Çĕнĕлĕхсемпе пĕр çыхăнура пыракан коллектив ял çыннисене çителĕклĕ те вăхăтлă пулăшу парас тĕллевпе кăçалхи кĕркунне ĕнесене киле тухсах искусственлă майпа пĕтĕлентерессине хăй çине илчĕ. Асăннă çĕнĕлĕх хаçат вулакансемшĕн интереслĕ пулнине шута илсе хамăр тĕпеле выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пуçлăхĕн çумне Николай ТРИФОНОВА чĕнтĕмĕр.***

**– «Ĕне – çур пурнăç», – тет выльăх-чĕрлĕхрен нихăçан та катара тăман чăваш хресченĕ. Анчах юлашки çулсенче хăш-пĕр ял тăрăхĕсен территорийĕсенче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем çукран ял çыннишĕн килти ĕнесене пĕтĕлентерессипысăк ыйту пулса юлчĕ. Мĕнле татса пама пулатьши ку ыйтăва?**

– Эсир хускатнă ыйту пирĕншĕн паллă. Иртнĕ кĕр кунĕсенче выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцире ĕнесене ятарлă специалист киле тухса пĕтĕлентерессине пурнăçлама куçса çӳрекен пункта тепĕр хут ĕçлеттерсе ятăмăр. Пирĕн патри пекех ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессипе Çатракассинчи тата Турайри ветеринари участокĕсенче ĕçлеме тытăннă. Вĕсенче ĕçсене пысăк пахалăхлă пурнăçлама пур хатĕрсем те çитеççĕ, ĕнесене пĕтĕлентерессипе опытлă специалистсем ĕçлеççĕ. Çак ĕçе ял çыннисем тивĕçлĕ йышăнсан тата унпа ĕçлекенсем алă усса вăй хумасан искусствăлла майпа пĕтĕлентерессипе килти хушма хуçалăхсенчи пур ĕнесемпе тынашкасене те пĕр шута кĕртме пулать.

**– Николай Юрьевич, мĕнпе уйрăлса тăрать-ха ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерни вăкăрсемпе пĕтĕлентернинчен?**

– Шăпах çакăнти уйрăмлăхсене пĕлменрен ĕнесене вăкăрсемпе пĕтĕлентерни ар çыхăнăвĕ урлă саралакан чирсене çул парать те. Ку çул килти хушма хуçалăх тытакансене чирленĕ ĕнесене сыватас тĕлĕшпе пысăк тăкак кӳрет. Çакă пулас пăрăвăн сывлăхĕпе аталанăвĕ çине те витĕм парать. Çав вăхăтрах ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентернин тĕллевĕ – кашни ĕнене пăруланă хыççăнхи пĕрремĕш уйăхрах тухăçлă пĕтĕлентерсе хăварасси, ĕнесем хĕсĕр юласран сыхланасси. Практика кăтартнă тăрăх ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерсен общиествăлла секторта та, килти хушма хуçалăхра та пăру илессипе кăтартусем лайăхланаççĕ. Кун пек чух селекципе ăратлăх ĕçĕ те çӳллĕ шайра пулса пырайрать. Апла пулсан выльăхсен паха енĕсене малалла аталантарма çул уçăлать.

**– Эсир ял çыннисем патне килсене тухса ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерме мĕнле вăрлăхпа усă куратăр? Выльăхăн ăратлăх пахалăхĕ пирки калаçма пулать-и кунашкал чух?**

– Ял çыннисен ĕнисене киле тухса искусствăлла майпа пĕтĕлентерме эпир хура-шурă ăратлă вăкăрсен вăрлăхĕпе усă куратпăр. Тĕрĕсленĕ çак вăрлăха ăратлăх ĕçĕпе тимлекен «Чувашское» усă акционерлă обществăран туянатпăр. Паянхи кун ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерме çак вăкăрсен вăрлăхĕпе усă куратпăр: а) хура-шурă, ăратлă, амăшĕ çулталăкне 9165 килограмм сĕт панă тата сĕтри çу хисепĕ 3,62 процентлă пулнă вăкăр; б) амăшĕ çулталăкне 10538 килограмм сĕт панă тата сĕтри çу хисепĕ 3,83 процентлă пулнă вăкăр.

**– Ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессин технологийĕпе тата çак ĕçĕн хакĕпе паллаштарайăр-ши?**

– Çакă ял çыннишĕн чи кăсăклă ыйту пуласса ăнлантăм. Анчах кунта хуравĕ те кашниншĕнех интереслĕ пуласса шанатăп. Ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессине ирпе тата каçпа пурнăçлатпăр. Кунта икĕ тĕрлĕ хак. Ĕнене участока çавăтса пырса пĕтĕлентерме – 650 тенкĕ. Çак ĕçе пурнăçлама специалиста киле чĕнсе илес пулсан – 1000 тенкĕ. Кунсăр пуçне ĕнесене пĕтĕлентерме кайнă сперма хакĕн 70 процентне республика бюджечĕ саплаштарнине шута илмелле. Çакна валли те ял çыннин инçе çула тухмалла пулмасть. Килти хушма хуçалăх хуçисен киле пынă осеменаторпа субсиди илме заявлени çырмалла пулать. Ун çумне ветеринари услугисемшĕн укçа тӳленине çирĕплетекен квитанци копине хумалла. Ыйтса çырнине оператор хăех тивĕçлĕ вырăна çитерет. Вăхăт нумаях та иртмĕ – ĕнене искусствăлла майпа пĕтĕлентернĕшĕн тивекен субсиди сирĕн перекет кĕнеки çине куçĕ.

Иртнĕ уйăхсенче пирĕн пулăшупа районта 200 яхăн ĕне хуçи усă курчĕ те. Çывăх уйăхсем шăпах ĕнесене пĕтĕлентермелли вăхăт пулнăран ĕç кăтартăвĕсем те ӳсессе шанатпăр.

**– Питĕ кăмăллă, анчах кирлĕ вăхăтра сирĕнпе епле çыхăнмалла?**

– Хăйсен килти хушма хуçалăхĕсенче ĕне е тынашка тытакансен вĕсене пĕтĕлентерме вăхăт çитсен тата çак ыйтăва татса пама йывăрлăхсем тухса тăрсан пĕр тăхтаса тăмасăр çак телефонсемпе шăнкăравлама пултараççĕ: 8-906-131-75-26 (Николай Трифонов), 68-7-22 (Çатракасси), 64-2-19 (Турай). Тивĕçлĕ пулăшу вăхăтра пулĕ. Сăмах май, киле пынă врачсем выльăх сывлăхĕ пирки вырăнтах тĕплĕ канашсем те парса хăварĕç.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Пурнăçри пархатарлăх**

# Ĕçлекен çын хисеплĕ

***Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев иртнĕ эрнере экономикăна модернизацилес тата ăна çĕнĕ технологисемпе пуянлатас тĕлĕшпе ĕçлекен канаш ларăвне ирттернĕ. Кун йĕркинчи ыйтусем хушшинче кадрсене пырса тивекенни те пулнă.***

***Рабочисем республика экономикине аталантарма хутшăнакан кадрсен 37 процентне йышăнаççĕ, апла пулсан асăннă професси пысăк пĕлтерĕшлĕ тата сумлă. Хальхи вăхăтра ытларах руль, станок умĕнче, цехра е фабрика-заводра вăй хуракансем кирлĕ. Паянхи çамрăксен 63 проценчĕ вара аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ илме тăрăшать. Вĕсем ытларах юрист, менеджер пулма, çапла майпа пысăкрах укçа ĕçлесе илме ĕмĕтленеççĕ. Çапах та хальхи вăхăтра рабочи профессийĕ тĕпре пулмалла, çакна паянхи пурнăç ыйтать. Ларăва пĕтĕмлетнĕ май республика Пуçлăхĕ вĕренӳ ĕçĕшĕн яваплă министрсенчен рабочисем вĕрентсе кăларас енĕпе çывăх вăхăтра мĕн-мĕн тумаллине уçăмлă палăртма, маларахри тĕллевсене пурнăçлама ыйтнă.***

Хальхи вăхăтшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ профессипе тимлекен çын шухăшкăмăлне тĕплĕнрех пĕлес тесе эпĕ Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Исетерккĕ ялĕнчи Владимир Трофимов хушма хуçалăхне утрăм, сехет йĕппи каç еннелле сулăннăччĕ ĕнтĕ. Хам ăнăçлă вăхăта лекнине пӳрте кĕрсен аван туйрăм – туслă кил-йыш çемье архивĕнчи сăн ӳкерчĕксемпе паллашатчĕ. Эпĕ те хăюлăх çитерсе маларах иртсе вĕсемпе кăсăклантăм, çапах та хам мĕн тĕллевпе килнине манмарăм. Акă шăпах алла Владимир Петрович руль умĕнче ларнă саманта ӳкерни лекрĕ, сăмах çăмхи çакăнтан сӳтĕлме пуçларĕ те ĕнтĕ.

– Çапла, вăхăт çав тери хăвăрт иртрĕ, анчах ĕçлеме пуçланă пекчĕ. Автомашинăпа 1976 çулта ĕçлеме пуçларăм, тĕрĕссипе унччен те руль умне ларса курнă-ха. Малтанхи утăмсем вара нихăçан та асран тухмаççĕ. Автомашинăна çĕмĕресрен, тĕрлĕ пăтăрмах тăвасран питĕ шикленеттĕмччĕ. Хам водитель пулнипе вара хăпартланатăп, руль умĕнчи çын – çăннипех те кирлĕ çын, – калаçрĕ вăл иртнĕ çулсене аса илнĕ май.

Çапла вара вăл мĕн ачаран вăр-вар пулнăскер шкултан вĕренсе тухать, ун хыççăн автошкулта пĕлӳ илет. Ку тĕлĕшри ĕç вăрттăнлăхĕпе паллашнăскер кĕçех салтак атти тăхăнать. Йăлтах йĕркеллĕ – чăн-чăн арçынăн çарта пулмалла, килçурт çавăрса çемьене тытса тăмалла, хăй йăх-несĕлне тăсма пултарма ача-пăча ӳстермелле. Акă ăçта вăл çыннăн пурнăçри тĕп пĕлтерĕшĕ. Ку енĕпе вара Володя пиччен ӳкĕнмелли çук, çумра çывăх çынсем – кун-çул парнеленĕ амăшĕ, çур сăмахран ăнланакан мăшăрĕ, ашшĕ-амăшне хисеплеме тата хаклама пĕлекен пилĕк ача тата ултă мăнук.

Эпĕ вара мĕн пирки килнине асрах тытнăран сумлă профессипех кăсăклантăм-ха. Халĕ вăхăчĕ самай улшăнчĕ те ĕçхĕлĕ урăхларах. Ун чухне асфальт çулсем сахал пулнă, çынран çӳллĕ кĕртсем самай чăрмав кӳнĕ, колхоз фермисенчен бидонсемпе сĕт турттарнă вăхăтра та тĕрлĕ пăтăрмаха лекнĕ. Водитель тăтăшах çул çинче, пĕрне çĕр кăмрăкĕ кӳрсе килсе памалла, тепĕрне вара вутă-шанкă кирлĕ. Çурт-йĕр çĕклесси чĕр нуша вĕт, кирпĕч е ытти материал тиесе килес пулсан черет кĕтнипе унтах çĕр каçни те пĕрре мар пулнă. Хирĕçлеме хăнăхман çын нушине аван ăнланакан çамрăк водитель. Кашнин ыйтăвне май пур таран тивĕçтерме тăрăшнă вăл. Çакă, паллах, ашшĕ-амăш воспитанийĕнчен тата вăл хăй ĕç çумне ачаллах çыпăçнинчен чылай килет ĕнтĕ. Питĕ шел, ашшĕ Петр Варсонофьевич, çăнăх арманĕнче ĕçленĕскер, пурнăçран ытла ир уйрăлнă çав.

Руль умĕнче тимлеме пуçланăранпа вара ултă мĕш автомашина ĕнтĕ ку. Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăл тĕп водитель тесен йăнăшмăп пулĕ. Е çур акире вăхăтра çĕр шуратса хăвармалла, е кĕркунне тыр-пул пухмалла – çĕрне-кунне пĕлмесĕр хуçалăх ĕçĕнче тăрăшать вăл, тиевпе тĕрлĕ çĕре çитет. Ĕçлекен çынна хисеплени вара малашне ытларах та вăй хума хавхалантарать. Владимир Петрович тăрăшулăхне чылай ĕç-хĕл çирĕплетет, умрах акă тĕрлĕ шайри йышлă Хисеп грамотипе Тав хучĕсем, вĕсенчен те сумлăраххи – КПСС тĕп комитечĕпе СССР Министрсен Совечĕ çирĕплетнĕ «Победитель соцсоревнования 1980 года» паллă.

Аслă пĕлӳ илсе пысăк должноçра вăй хуракан çын сумлă пулни иккĕлентермест. Анчах та чăваш халăхĕ – пирĕн йăх-несĕл – мĕн авалтан çĕр ĕçĕпе тимленĕ, çăкăр ӳстернĕ, апла пулсан, çӳлерех асăннă пек каласан, рабочи профессийĕ республика экономикине аталантарать. Çакна ял хуçалăх ĕçченĕ Владимир Петрович калаçăвĕ те çирĕплетрĕ.



Черетлĕ сăн ӳкерчĕкре вара туслă йыш спорт тумĕпе тăрать, вĕсем пĕрпĕр ăмăртăва хутшăнма хатĕр тейĕн. Çапла, ку çемьере кашниех мĕн ачаллах спортпа туслашса ӳснĕ. Людмила Евлампьевнăпа Владимир Петрович хăйсем те йĕлтĕрпе ăмăртнă тата спортăн ытти тĕсĕпе çывăх пулнă. Асăннă йышра кун йĕркине пăхăнасси çирĕп йăлана кĕнĕ. Кашни ир, çанталăк мĕнлине пăхмасăр, чупса килмелле, ун хыççăн сивĕ шывпа сапăнмалла пулнă. Урасем хур лаппи пек хĕрелни те вĕсене çак ĕçе тума чарман. Çемьери кашни ача ашшĕ ертсе пынипе çакăн витĕр тухнă. Урамри ытти ача та вĕсене тĕслĕхе илме тăрăшнă. Мĕн пĕчĕккĕллех спорта юратма вĕрентни вара харама кайман. Халĕ Василийпе Петр – паллă спортсменсем, вĕсем Раççей шайĕнче те хастар. Василий – хăвăрт утас енĕпе спорт мастерĕ. Петр – çак енĕпех тĕнче креслă спорт мастерĕ тата тренер. Халĕ вăл Абхазинче черетлĕ çул çӳревре.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Пĕлтерӳсем. Объявления




## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:092701:1118, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:118, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы, для установки временных сооружений (погреба и гаража), площадью 90 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

* * *

Çулталăкри шурă тĕслĕ качака путекки сутатăп. Тел.: 8-927-840-15-63.

* * *

Реализуем за наличный и безналичный расчет ж/б кольца с крышками разных диаметров для колодцев и выгребных ям. Хвойный лес для срубов от 6 до 10 м. Трансформатор ТМ-160–ТМ-400. Доставка до 10 км бесплатно. Цены от производителя, ниже рыночных. Выполняем все виды электромонтажных и электроизмерительных работ. Тел.: 8-905-342-98-11.

* * *

Пĕрремĕш хут çулнă утăран тунă тăваткал тюк сутатăп. Хакĕ каласса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-905-343-01-59.

* * *

НОВОГОДНИЕ СКИДКИ! Продаем пшеницу, ячмень, рожь. Тел.: 8-987-760-57-71, 8-919-653-25-41. 1-5.




ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 4-10.

Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 8-10.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92. 29-33.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 23-25.

Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб. 4-10. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.







Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 12-14.

* * *

Мартăн 12-мĕшĕнче пăруламалли хĕрлĕ-сарă тĕслĕ тынашки тата 2 сурăхпа путеккисене сутатпăр. Тел.: 8-961-340-21-35.

4-8.



# займы

• на покупку и строительство жилья с использованием материнского капитала

**АКЦИЯ**

**% СТАВКИ СНИЖЕНЫ до 31 января 2014 года**

для пайщиков кооператива

Кредитный потребительский кооператив “Содружество” с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23
62-6-86, 8 900 333 0001




Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7;1.0;1.5, крышки днища. Доставка. Установка. Тел.: 8-902-327-82-52. 9-12.

* * *

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 9-10.

* * *

Продаю мед: магазин «Визит», Моргаушский рынок, место 40. Цена – 300 руб. 4-5.

* * *

В связи с открытием АЗС требуются операторы и заправщики. Официальное трудоустройство. Достойная заработная плата. Тел.: 8(83541)69-8-11. 3-3.

* * *

Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Интехс», с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 3-5.

* * *

9 уйăхри хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-962-598-53-57.

* * *

Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.







Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (сторца здания Дома быта). Тел.: 62-3-80. 3-10.

## Прогноз погоды

| | суббота 14 декабря | | | | воскресенье 15 декабря | | | | понедельник 16 декабря | | | | вторник 17 декабря | | | | среда 18 декабря | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -2 | -7 | -8 | -7 | -9 | -10 | -10 | -9 | -10 | -12 | -11 | -12 | -15 | -15 | -11 | -2 | -2 | -4 | -4 |
| Давление мм | 726 | 730 | 732 | 734 | 737 | 740 | 742 | 744 | 746 | 747 | 748 | 750 | 751 | 750 | 747 | 743 | 743 | 744 | 743 |
| Влажность % | 99 | 91 | 82 | 91 | 88 | 85 | 83 | 84 | 85 | 85 | 80 | 86 | 91 | 88 | 84 | 95 | 94 | 94 | 92 |
| Ветер м/сек | 5 | 8 | 6 | 8 | 7 | 6 | 6 | 7 | 6 | 5 | 4 | 4 | 2 | 3 | 5 | 6 | 6 | 5 | 3 |
| | З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З | З | Ю | Ю | З | З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 09:17 | 16:18 | | | 09:18 | 16:18 | | | 09:19 | 16:18 | | | 09:19 | 16:18 | | 09:20 | 16:18 | |
| Луна восход / заход | | 14:48 | 05:49 | | | 15:22 | 06:55 | | | 16:03 | 07:54 | | | 16:52 | 08:45 | | 17:47 | 09:29 | |

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:180701:1 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Матвеев Геннадий Иванович, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Синьял-Акрамово, ул. Колхозная, д. 4.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:180701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

«Малыш» ача сачĕн коллективĕ кунта воспитательте тăрăшакан О.Е. Николаевăн мăшăрĕ

**Алексей Юрьевич**
**НИКОЛАЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнăран унпа тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, явапллă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапллă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă13.12.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4810.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.